Иванов К.В. Хальхи самана; Парăс; Сăпка юрри : [сăвăсем] / К.В. Иванов // Пионер сасси. – 1990. – 26 çу.





Поэт хайен тăван шăллĕпе Квинтилианпа.
К. ИВАНОВ тунă фотоӳкерчĕк. 1910—1911 çç.



# АСЛĂ ПОЭТА ЧЫСЛАСА

Элĕк ватам шкулне пысăк уяв пулчĕ. Акт залне халăх йышлăн пухăнчĕ. Стенасенчинче — «К. В. Иванов çуралнăранпа 100 çул» бюллетень, вĕренекенсен ӳнерçĕкĕсемпе йĕркеленĕ «Сипи ячĕпе» выставка, аслă поэт кĕнекисем, портречĕсем.

Э. Кузьмина учительница вилемсĕр «Нарспи» поэма авторĕн кунçулĕпе ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ, вал каланă май сцена çинчен пичĕ кмеш улттамĕш классенче вĕренекенсем классик сăввисене вулярĕç. Ана чысласа çырнă, тăван Чăваш çĕршывĕпе унăн ĕçчен халăхне мухтаса калана Н. Шелепи, Я. Ухсай, М. Ваçлей ва В. Давыдов Анатри сăввисем вĕçевĕç янăрарĕç. Константин Васильевичăн «Çултаlăк хушши», «Инкĕ хер», вырăсларан куçарна «Парăс» (М. Ю. Лермонтов) хайлавĕсене те астан шарантарчĕç ачасем.

Виççĕмĕшсем «Нарспи» поэмăри «Силпи ялĕнче» сăвва ушкăнпа каласа парĕç. 7 меш класри Н. Майорова «Сарă хĕр» сыпăка пысăк тунăчпа вуларĕ.

Сапла палăрта тăрăпар К. В. Иванов çуралнăранпа 100 çул çитнине шкул.

**Н. ЛАРИОНОВ, вĕрентекен.**

Константин ИВАНОВ

# *Хальхи самана*

**1908-мĕш çулхи октябрĕн 28-мĕшне**

Ачаш кăна ачам пур,
Пĕртте хăпа пĕлмерĕ.
Апат çисе ларнă чух
Аран çилĕ килмерĕ.
«Çыру пĕлме, çын пулма
Ялти шкула яр-ха, — тет.—
Çыру пĕлни мĕн тума
Кирлĕ çынна, атте?» — тет
— Ачам, ачам, ан йĕтет,
Илтес кунта ху илтĕн,
Хут вĕренни уссине,
Хут вĕренсен, ху пĕлĕн.
Çитес çула çитсессĕн,
Пăртак ăс-пуç кĕрсессĕн,
Ярăп акă сана та
Ялти шкула ăс пухма.
Турă хушсан, çын пулсан,
Курăн Чĕмпĕр хулине,
Ентĕ, ачам, самана
Ĕлĕкхи мар кучуне.
Ĕлĕкчĕ вăл, ĕлĕкчĕ,
Урăх тĕслĕ ĕмĕрччĕ.
Тырă-пулă пит пулнă,
Тырă акма çĕр пулнă.
Ĕмĕр иртнĕ ĕç çинче,
Ĕç иртсессĕн — ĕçкĕре.
Анчах тĕрлĕ хуйхă та
Пайтах пулнă-çке тата.
Тухатмăш та тухатать,
Юмăçĕ те хăратать,
Асамăçсем асаççĕ.
Ача-пăчана пăсаççĕ.
Вырăссем те вĕсене,
Ырă сунса, вĕрентме
Ачисене илеççĕ,
Аппамашне йĕртеççĕ.
Тарăхтарать таркăн та,
Вархурах та — вăрманта.
Тĕрлĕ усал-тĕсепрен,
Тĕрлĕ усал чирсенчен
Чӳк кулленех тумалла,
Путек-сурăх пусмалла.
Куллен-кунах чӳк туни —
Хĕл-çăвĕпех хĕн курни.
Киреметре кĕлли пур,
Хăяматра хывни пур,
Кĕлтуса та килĕшмест,
Киремет те итлемест,
Турăсем те чӳксене
Илми пулчĕç кучуне.
Кунçул пăсăлса кайрĕ,
Куçпуç атаписа кайрĕ:
Те тутара тухас-ха,
Те юталла тарас-ха.
Анчах ыр çын тупăнчĕ,
Самана те улшăнчĕ.
Урăх çулпа утрăмăр,
Урăх çĕре тухрăмăр.
Кулсăр пуçне чăвашсем
Мĕн пулĕччĕç халиччен?
Тутаралла тухĕччĕç,
Тутар тĕнне тытăччĕç.
Е вырăса ерĕччĕç,
Пĕрерĕнех пĕтĕччĕç.
Ырă чăваш тупăнчĕ,
Ырă ĕçе тытăнчĕ.
Чăн чăвашла сăмахпа
Хăй тăванне чăваша
Пырса çапрĕ чĕрине,
Пăлхатса ячĕ чĕрене.
Пăлхатниччен питĕрех
Шухăш ӳкрĕ пуç çине.
Çĕнĕ ĕмер пар-и çав?
Пур çĕрте те ялсенче
Хура халăх хушшинче
Хут вĕренме тытăнчĕç.
Шкулсем нумай уçăлчĕç.
Вĕсен чĕри Чĕмпĕрте,
Аслă чăваш шкулĕнче.
Кĕпекесем çаптарчĕç,
Çын хушшине салатрĕç;
Кĕçке ĕнтĕ куçĕсем
Усăлаççĕ чăвашсен.
Кĕçке курма пуçларĕç,
Тĕнче кура пуçларĕç.
Çав ĕçсене кам турĕ,
Çак таранччен тăрăшрĕ?
Çак таранччен тарăхса,
Чăвашсемшĕн тăрăшса
Кунçулĕнче курнине,
Шухăшпала шурнине
Кам каласа парĕ-ши?
Кам ырă ят сарĕ-ши?
Эй, самана, самана!
Мĕн кăтартăн малалла?
Хальхи кунсем каяла-ха.
Килес кунсем мĕнле-ши?
Пурăнатпăр хуллен çеç
Аслă çынсен ăсĕпе.
Вĕсем пире юратса,
Хăй шухăшне хăварса
Халăх ĕçне тăваççĕ,
Халăх хуйхипе сунаççĕ,
Ырă çынсем ыйтнине,
Кирек кама кирлине
Ялан пĕлсе тăраççĕ,
Юратайса тăваççĕ.
Анчах чăваш хушшинче
Чунĕ хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларĕç,
Тăрса çапла каларĕç:
«Чаплă вырăн тупасчĕ,
Часрах улпут пуласчĕ».
Тĕрлĕ çутă тӳммешĕн
Тĕнки тухать ав лешĕн;
Чăвашла та калаçмасть,
Тăванне те астумасть:
Чĕри шăнса кайнă çав,
Чĕрĕ виле пулнă çав.
Çитменнине çын çине
Çитмен пурнăç çитрĕ çав.
Иывăр кунсем килчĕçĕ,
Выçлăх çулсем çитрĕçĕ.
Çĕрĕ тăвăр, тыр ӳсмест,
Тăранма та çитеймест.
(Выçă çăвар выçлăхне
Килкартине кĕрсенех
Турчăкапа тухас та,
Сухалĕ çине сурас та,
Хăваласах кăларас,
Хапхаранах ăсатас).
Чăтаççĕ-ха чăвашсем.
Вĕсенех çитмен-ха вĕсем,
Ĕçкĕ-çикĕ тунă чух,
Ĕçсе-çисе ларăн чух,
Юррисене юрлаççĕ,
Кулçулĕне кулаççĕ.
Чăваш! сана уп чухне,
Чуну çĕкленнĕ чухне
Мĕн пит асна килет-ши?
Мĕн пит чунна хĕсет-ши?
Савăкăç-и, куççуль-и
Сан куçăнта куç тулли?

# *Парăс*

**(М. Ю. Лермонтовран)**

Пĕччен парăс шуррăн
курăнать
Кăвак тинĕс тĕтри ăшĕнче...
Мĕн иçе, ют çĕрте вăл
шырать?
Мĕн хăварнă вăл хăй
килĕнче?

Чӳхенеççĕ хумсем, çил
улать,
Шăтăр-шатăр юпа авăнать...
Анчах парăс телей
шырамасть,
Телейрен те тарса вăл
каймасть!

Çутă юхăм унăн аиĕнче,
Ӳлтен ылттăн хĕвел
çутатать;
Канăçсăр! çил тăвăл шавĕнче
Канлĕх пур пек, тăвăл вăл
ыйтать.

# *Сăпка юрри*

**(А. Н. Майковран)**

Çывăр, ачам, сывăрах!
Айху тутлă пултăрах!
Сана пăхма илтĕм эп
Амăрткайăк, çил, хĕвел.

Амăрт вĕçрĕ килелле,
Хĕвел анчĕ ту айне;
Виçĕ касран çилĕ те
Вĕçрĕ амăшĕ патне.

Çилтен ыйтать амăшĕ:
— Аçта эсĕ пултăн-ши?
Çăлтăрсемпе вăрçрăн-и?
Е хумсене çапрăн-и?

— Тинĕс хумне çапмарăм,
Çăлтăрсене тивмерĕм,
Эпĕ ача сыхларăм, —
Ун сăпкине сиктертĕм.



К. Ивановăн вĕрентекенĕсем. Варринче — И. Я. Яковлев.